# Япала ячĕ

япалана
пĕлтерет

**КАМ?**
**МĔН?**

В п

Х п н

п пЯТ

К.ф.

П -и -скер

Ст (тан.)

К.ф. = С + !

В п

-чĕ(-ччĕ)

**Пĕтĕмлетӳ !!!**

# Пĕтĕмлетӳ !!!

- япала ячĕ япалана пĕлтерет .
- япала ячĕ вĕçленет,
- пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пулать;
- пайăр тата пайăр мар ят япала ячĕн çеç пур;
- камăнлăх форминче пулать;
- камăнлăх форминче сăпатланать;
- палăрту формин аффиксне йышăнать;
- танлаштару степенĕнче пулать;
- предложенире пур член та пулать;
- япала ячĕн ыйтăвĕсем - КАМ? МĔН? ;
- сăмах тĕпĕ – тĕп падежра пулать;
- предложенире сказуемăй пулнă чухне иртнĕ вăхăта палăртма пултарать;

# Япала ячĕсен пулăвĕ

**Морфологи мелĕ (тĕрлĕ аффикссем хушăннипе)**

**куçлăх,**
**хăвалăх,**
**арпалăх,**
**шĕшкĕлĕх,**
**çăварлăх,**
**патшалăх,**
**пуласлăх,**
**кĕтӳç(ĕ),**
**юмахçă,**
**сунарçă,**
**вăрăмăш,**
**анлăш**

**Лексикăпа синтаксис мелĕ (хутлă сăмахсем, мăшăр сăмахсем)**

**çăраççи, çуртри, тăвайкки, асатте, асанне, электрохунар, партпуху, электропăчкă, çăкăр-тăвар, уй-хир**

# Тухăçлă аффикссем

| Аффикссем | Мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
| --- | --- | --- |
| -лăх(-лĕх) | япала ячĕ | хурăнлăх, шурлăх, уйăхлăх, çăварлăх, тĕслĕх, |
| -çă(-çĕ) | япала ячĕ | пулăçă, атăçă, калавçă, сăнавçă, такмакçă, элекçĕ |
| -кăч (-кĕч)<br>-кăç(-кĕç) | глагол | ĕмкĕч, сĕркĕч, пускăч, ăскăч, каркăç, ларкăч,<br>вĕркĕч |
| -ăш(-ĕш) | япала ячĕ<br>паллă ячĕ<br>глагол | лаптăкăш, калăпăш<br>пысăкăш, сарлакăш, çӳллĕш, инçĕш, йывăрăш<br>тупăш, кулăш, пĕлĕш |
| -лăх(-лĕх) | паллă ячĕ<br>хисеп ячĕ<br>местоимени | тасалăх, хаваслăх, тĕрĕслĕх<br>пĕрлĕх<br>харпăрлăх |
| -в | глагол | калав, суйлав, вулав, тĕпчев, хунав |
| -у(-ӳ) | глагол | вĕренӳ, пуху, ăмăрту, пĕлӳ |
| -ăм(-ĕм)<br>-шка(-шке)<br>-чăк(-чĕк)<br>-ăм(-ĕм) | глагол<br>япала ячĕ<br>глагол<br>глагол | парăм, кӳлĕм, пусăм, сисĕм, пӳлĕм, çиçĕм<br>сунашка,хӳрешке, кукрашка<br>сурчăк, шанчăк, ӳкерчĕк<br>вилĕм, пулăм, чикĕм |

# Хутлă япала ячĕсем

| Пулăвĕ енчен мĕнлисем | Тĕслĕхсем |
| --- | --- |
| I. Кĕскелсе пулнисем: | |
| 1) изафет конструкцийĕсенчен (япала ячĕпе япала ячĕн çыхăнăвĕнчен пулнисем) | анкарти (<авăн карти), алсиш (<алса ăшĕ), картиш (<карта ăшĕ), вырсарни (<вырăс эрни), çăраççи (<çăра уççи) |
| 2) паллă ячĕпе япала ячĕн çыхăнăвĕнчен пулнисем | асатте (<аслă атте), асанне (<аслă анне), кĕçнерни (<кĕçĕн эрне) |
| II. Кĕскетсе тунă хутлă япала ячĕсем | партпуху, ялпо, райпо, электрохунар, фотоӳкечĕк, райхаçат, ялкор, райĕçтăвком, политпай, литпĕрлешӳ, электронасус |

# Мăшăр япала ячĕсем

| Мĕнле сăмахсем мăшăрланнипе пулаççĕ? | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| **I. Мăшăр сăмахсен икĕ компоненчĕ те хăйсен пĕлтерĕшне çухатманнисем:** | |
| 1) синонимлă сăмахсем | вăй-хал, апат-çимĕç, ака-суха, кил-çурт, вут-çулăм, укçа-тенкĕ, ӳт-пӳ, хурт-кăпшанкă |
| 2) антонимлă сăмахсем | суту-илӳ, лару-тăру, ир-каç |
| 3) пĕр йышши ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем | тӳшек-çытар, пит-куç, утă-улăм, çăкăр-тăвар, хур-кăвакал, хул-çурăм |
| **II. Мăшăр сăмахсен иккĕмĕш компоненчĕ хăйсен пĕлтерĕшне тĕксĕмлетнĕ е пачах çухатнă** | ача-пăча, ăс-хакăл, выльăх-чĕрлĕх, кӳршĕ-аршă, хăна-вĕрле, савăт-сапа, яш-кĕрĕм, хуйхă-суйхă, тимĕр-тăмăр, çӳпçе-çарма, сас-хура, аш-пăш, тути-маси |

Чăваш чĕлхинче пĕр вĕçленӳ çеç!

# Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ



| | | |
|---|---|---|
| тĕп падеж | кам? | мĕн? |
| камăнлăх падежĕ | камăн? | мĕнĕн? |
| пару падежĕ | кама? | мĕне? |
| вырăн падежĕ | камра? | мĕнре? |
| тухху падежĕ | камран? | мĕнрен? |
| пĕрлелĕх падежĕ | кампа? | мĕнпе? |
| çуклăх падежĕ | камсăр? | мĕнсĕр? |
| пирке падежĕ | камшăн? | мĕншĕн? |

№1

| № | Падежсем | Ыйтусем | Х п | Х н |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Тĕп | Кам? Мĕн? | | - *сем* |
| 2. | Камăнлăх | Кам*ăн*? Мĕн*ĕн*? | *-ăн-(ĕн)* | *-сен* |
| 3. | Пару | Кам*а*? Мĕн*е*? | *-а(-е)* | *- сене* |
| 4. | Вырăн | Кам*ра*? Мĕн*ре*? | *-ра (-ре)*<br>*-та (-те), -че* | *- сенче* |
| 5. | Туху | Кам*ран*? Мĕн*рен*? | *-ран (-рен)*<br>*-тан (-тен),-чен* | *- сенчен* |
| 6. | Пĕрлелĕх | Кам*па*? Мĕн*пе*? | *-па (-пе)-пала(-пеле)*<br>*-палан (-пелен)* | *- семпе* |
| 7. | Çуклăх | Кам*сăр*? Мĕн*сĕр*? | *-сăр (-сĕр)* | *- семсĕр* |
| 8. | Пирке | Кам*шăн*? Мĕн*шĕн*? | *-шăн(-шĕн)* | *- семшĕн* |

## Тĕслĕхрен:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп пад. | - *çăкăр* | *пĕлĕт* |
| Камăнлăх пад. | – *çăкăр* - *ăн* | *пĕлĕт* - *ĕн* |
| Пару пад. | - *çăкăр* - *а* | *пĕлĕт* - *е* |
| Вырăн пад. | - *çăкăр* - *та* | *пĕлĕт* - *ре* |
| Туху пад. | - *çăкăр* - *тан* | *пĕлĕт* - *рен* |
| Пĕрлелĕх пад. | - *çăкăр* - *па* | *пĕлĕт* - *пе* |
| Çуклăх пад. | - *çăкăр* - *сăр* | *пĕлĕт* - *сĕр* |
| Пирке пад. | - *çăкăр* - *шăн* | *пĕлĕт* - *шĕн* |

# Пĕтĕмлетӳ

- Япала ячĕ  вĕçленет.
- Чăваш чĕлхинче 8 падеж.
- Вĕсен ячĕсем: тĕп, камăнлăх, пару, вырăн, туху, пĕрлелĕх, çуклăх, пирке.
- Ыйтăвĕсем:  кам? мĕн? кам**ăн**? мĕн**ĕн**? кам**а**? мĕн**е**? кам**ра**?   мĕн**ре**? кам**ран**? мĕн**рен**? кам**па**? мĕн**пе**? кам**сăр**? мĕн**сĕр**? кам**шăн**? мĕн**шĕн**?

**Чăваш чĕлхинче япала ячĕ предложенире тепĕр япала ятне, глагола тата паллă ятне ăнлантарать. çавăнпа та падежсене виçĕ ушкăна уйăраççĕ:**

| | | |
|---|---|---|
| **глаголпа сыхăнаканнисем:** | **япала ячĕпе сыхăнаканнисем:** | **паллă ячĕпе сыхăнаканнисем :** |
| **(пурте)** | **( тĕп камăнлăх пирке )** | **( пару туху пĕрлелĕх çуклăх пирке)** |

# Тĕп падеж

кам?
мĕн?



Япала ячĕн тĕп,
тата тĕп мар падеж формисем пулаççĕ.

**Тĕп падежри япала ячĕ çак пуплев пайĕсене ăнлантарать:**

**глагола**

**а) ĕç объектне пĕлтерет:**

*Кĕнеке вулама пуçланăранпа пурнăç çине вăл урăхла пăхма пçларĕ. (Кип.);*

**ă) ĕç вăхăтне пĕлтерет:**

*Ир такăнсан каçчен теççĕ. (Ват. сăм.)*

**япала ятне**

**а) япалана мĕнрен тунине кăтартать:**

*ылтăн çĕрĕ, юман катка*

**ă) камăнлăха кăтартать:**

*анне чĕри, атте çăкăрĕ*

**б) япала хăш ушкăна кĕнине кăтартать:**

*хĕрарăм лётчик, чăваш командир*

**в) мĕн çинчен те пулин çирĕплетсе парать:**

*А.Г.Николаев космонавт – пирĕн ентеш.*

**г) мĕнле япалапа çыхăннине пĕлтерет:**

*Чăваш Республики, Шупашкар хули*

# Камăнлăх падежĕ

камăн?
мĕнĕн?



Япала е камăннине, е мĕнĕннине, е икĕ япала хушшинчи çыхăнăва пĕлтерет

## Асра тытма!

- 1[□] ă,ĕ+ -ăн(-ĕн)= 2 □□
- 2[□□] ă,ĕ + -ăн(-ĕн)= 1 □
- 3 е > сыпăклă ă,ĕ + -ăн(-ĕн)= 1 □
- у, ӳ+ -ăн(-ĕн)= в+ăн (в+ĕн)
- н + -ăн(-ĕн)= нн

ссылка

- **Пĕтĕмлетӳ!** Камăнлăх падежĕнче **ă, ĕ** сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем çак сасăсене çухатаççĕ:

| вĕсем **умĕн** 1 **[□]** пулсан вăл **вăрăмланать** | вĕсем **умĕн** 2 **[□□]** пулсан **вăрăмланмаççĕ** | **виçĕ е > сыпăклă** сăмахсенче **[□]** **вăрăмланмасть** |
| --- | --- | --- |
| ***пуллăн*** | ***пăчкăн*** | ***пулăçăн*** |
| ***кĕввĕн*** | ***пĕрчĕн*** | ***карланкăн*** |
| ***сăввăн*** | ***тенкĕн*** | ***тимĕрçĕн*** |
| ***сассăн*** | ***кӳршĕн*** | ***сунарçăн*** |
| ***юррăн*** | ***шĕшлĕн*** | ***икерчĕн*** |

- Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмах вĕçĕнчи **[ă, ĕ]** сасăсем пару падежĕнче тухса ӳкмеççĕ. Сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине **[Н]** кĕрсе ларать:

  ***машинăн фабрикăн Кольăн фермăн***

- **[ А, е]** сасăпа пĕтекен япала ячĕсемпе камăнлăх падежĕн аффиксĕсем хушшине **[Н]** кĕрсе ларать**:**

  ***аннен ачан кăмпан***

- Япала ячĕ **[у,ӳ]** сасăсемпе пĕтет пулсан -- морфемăсен чиккинче çав сасăсем ă,ĕ сасăсемпе ылмашаççĕ, сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине **[В]** сасă кĕрсе ларать:

  ***пăрăвăн кĕрĕвĕн çырăвăн кĕтĕвĕн хуплăвăн***

- Асăрхаттару! Камăнлăх категорийĕн 2-мĕш сăпат форми те **[у,ӳ]** сасăсемпе пĕтет, анчах та ку форма камăнлăх падежĕн аффиксне йышăннă чухне улшăнмасть: ***аçун аннӳн юлташун пиччӳн аппун***

# Пару падежӗ

**кама? мӗне?**

## Пӗлтерӗшӗ:

- **вырăн**
  (*Ĕçе каймасăрах ывăнас мар.*)

- **объект**
  (*Вата сынна сăмахпа улталаймăн.*)

- **вăхăт -- ĕç хăш вăхăтра пулни, мĕн вăхăта тăсăлни**
  (*каç, çĕр, çул, уйăх, эрне*)

- **ĕçĕн тĕллевне, сăлтавне**
  (*çырлана кай*)

## Асра тытма!

**Пару падежĕ:**

- 1[□] ă,ê+ -а (-е )= 2 □□
- 2[□□] ă,ê + -а (-е )= 1 □
- 3 е > сыпăклă ă,ê+ -а (-е )= 1 □
- у,ӳ+ -а (-е )= в+а (в+е )
- н + -а (-е )= не

ссылка

# Пĕтĕмлетер!

Япала ячĕ пару падежне йышăннă чухне сăмах вĕçĕнчи [ă, ĕ] сасăсем тухса ӳкеççĕ. Ку сасăсем умĕн:

| | | |
|---|---|---|
| 1 [□] пулсан вăл вăрăмланать | 2[□□] пулсан вăрăмланмаççĕ | виçĕ сыпăклă сăмахсенче [□] вăрăмланмасть |
| *пулла* | *пăчка* | *пулăçă* |
| *кĕвве* | *пĕрче* | *карланкă* |
| *сăвва* | *тенке* | *тимĕрçĕ* |
| *сасса* | *кӳрше* | *сунарçă* |
| *юрра* | *шĕшле* | *икерчĕ* |

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмах вĕçĕнчи [ă,ĕ] сасăсем пару падежĕнче тухса ӳкмеççĕ. Сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине [Н] кĕрсе ларать:

*машинăна* *Кольăна* *фабрикăна* *фермăна*

[ А, е] сасăпа пĕтекен япала ячĕсемпе пару падежĕсен аффиксĕсем хушшине [Н] кĕрсе ларать:

*аннене* *аттене* *кукана* *йĕркене*

Япала ячĕ [ у, ] сасăсемпе пĕтет пулсан морфемăсен чиккинче çав сасăсем [ă,ĕ] сасăсемпе ылмашаççĕ, вара сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине [В] сасă кĕрсе ларат

*пăрăва* *çырăва* *пĕлĕве* *кĕрĕве*

[И] сасăпа пĕтекен япала ячĕсенче сăмах тĕпĕпе падеж аффиксĕ хушшине [Й] хупă сасă кĕрсе ларать:

*шăшие* *пăрие* *тăрие* *поэзие*

# Вырăн падежĕ

камăн?
мĕнĕн?

-ра (-ре),
-та (-те),
-че

## Асра тытма!

- [Р] + -та (-те) = тăварта, çăварта

- [Л] + -та(-те), -ра (-ре) = тенкелте е тенкелре
  [Н] тусанта е тусанра
  [ЛЬ] кукăльте е кукăльре
  [НЬ] супăньте е супăньре
- [ыттисем çумне] + -ра(-ре) = кӳлĕре, çăкара
- Х (н) + -че = ачасенче, шкулсенче, çынсенче
- [Т] [Д] [ДЬ] Çак сасăсемпе пĕтекен сăмахсенчен пулнă 3-мĕш сăпат форминчи [Ч] сасă вырăн падежĕнче [Т, Д] сасăсемпе ылмашать! *тетрадĕнче, çуртĕнче*

**Пĕлтерĕшĕ:**

- япала камрине е мĕнрине
- ĕç вырăнне
- мĕнле ĕçре тăнине, ĕçленине
- ĕç вăхăтне

ссылка

# Тухху падежĕ

камран?
мĕнрен?

-ран (-рен),
-тан (-тен),
-чен

## Пĕлтерĕшĕ:

- вырăна
- вăхăта
- объект пĕлтерĕшлĕ
- танлаштару пĕлтерĕшлĕ

## Асра тытма!

- [Р] + -тан (-тен) = тăвартан, çăвартан
- [Л] [Н] [ЛЬ] [НЬ] + -тан(-тен), -ран (-рен) = тенкелтен е тенкелрен, тусантан е тусанран, кукăльтен е кукăльрен, супăньтен е супăньрен
- [ ыттисем çумне] + -ран(-рен) = кӳлĕрен, çăкаран
- Нумайлă хисепре + -чен = ачасенчен, шкулсенчен, çынсенчен
- [Т] [Д] [ДЬ] Çак сасăсемпе пĕтекен сăмахсенчен пулнă 3-мĕш сăпат форминчи [Ч] сасă вырăн падежĕнче [Т, Д] сасăсемпе ылмашать: тетрадĕнчен, çуртĕнчен

# Пĕрлелĕх падежĕ

**кам*па*?**
**мĕн*пе*?**

*-па ( -пе)*

**Пĕрлелĕх падежĕ ĕçе кампа пĕрле,**
**мĕнле хатĕрпе тунине, ĕçĕн вырăнне, вăхăтне палăртать.**

***Тырра ĕлĕк çурлапа вырнă, халĕ - комбайнпа***

# Çуклăх падежĕ

**камсăр? мĕнсĕр?**

– мĕн те пулин çуккине, ĕçе вĕçĕмсĕр тунине е тума çуккине пĕлтерет:

Вăл пăхрĕ манăн урана,
Эп пăхрăм унăн урине.
Пĕр сассăр култăмăр кăна.
Эпир ташлană хамрăнне… (П.Хусанкай)

– ĕç вăхăтне пĕлтерет : каççăр пуçланмасть, ирсĕр пĕтеймест, çулталăксăр пулмасть;

# Пирке падежĕ

**камшăн? мĕншĕн?**

Пирке падежĕнчи сăмахсем нумай пĕлтерĕшлĕ:

а) ĕç сăлтавне е тĕллевне пĕлтерет;

ă) ĕç камшăн е мĕншĕн пулнине, камшăн е мĕншĕн тăрăшнине пĕлтерет.

# Япалан хисепне палăртасси

**Япала ячĕ хисеп тăрăх улшăнать-- пĕррелĕх тата нумайлăх хисепĕнче пулать.**

X п н

**пĕррелĕх**

X п

**нумайлăх**

X н

**Морфологи мелĕ**

**1. - сем(-сен)**

**Лексика мелĕ**

**2. ял-ял,…**

**3. чылай, нумай,…**

**4. хисеп ячĕ**

(икĕ çын,
çирĕм кĕнеке)

! çÿç
тусан
хăйăр
ылтăн
} **пĕрчи**

! **пыл**
**сĕт**
} **тумламĕ**

№1

# Пайăр тата пайăр мар ятсем

пЯТ



[çын ячĕ, хушамачĕ, ашшĕ ячĕ]



[уявсен ячĕсем]

[географи ячĕсем]



[çĕр-шыври чи пысăк должноçсен, организацисемпе учрежденисен ячĕсем]

[хаçат-журналсен, кĕнекесен, хайлавсен ячĕсем]

[орденсемпе медальсен ячĕсем]



**Пайăр ятсене пысăкран пуçласа çырмалла!!!**

[Пайăр]

[Тĕп слайд]

[ссылка]

[№1]

# Камăнлăха палăртасси

Синтаксис мелĕ

Морфологи мелĕ

**К.ф**

манăн атте
кукка хĕрĕ
атте çĕрĕ

$X_п$ $X_н$

$C_1$ -ăм(-ĕм -ем) -ăр(-ĕр)

$C_2$ -у(-ÿ) -ăр(-ĕр)

$C_3$ -ĕ(-и) -V

№1

## 1. Синтаксис мелĕ

(япала ячĕ умне местоименисем лартни)

манăн юлташ,
санăн тетрадь,
унăн кĕнеки,
пирĕн шкул,
сирĕн колхоз,
вĕсен ялĕ

## 2.Морфологи мелĕ

(япала ячĕсем çумне ятарлă аффикссем хушни)

юлташăм,
юлташу,
юлташĕ
кĕнекем,
кĕнекӳ,
кĕнеки
ывăлăм,
ывăлу,
ывăлĕ

# Камăнлăх форми япалапа хуçи пĕрре е нумай пулнине кăтартма пултарать.

| | Х п | Х н |
|---|---|---|
| С 1 | çăкăр - ***ăм*** | çăкăр – ***ăм – ăр - сем*** |
| С 2 | çăкăр - ***у*** | çăкăр – ***V – ăр - сем*** |
| С 3 | çăкăр - ***ĕ*** | çăкăр – ***ĕ - сем*** |

ссылка

# Камăнлăх аффиксĕ хушăннă чух пулакан улшăнусем

| Сăпатсем | Япала ячĕ *а, е* сасăсемпе пĕтнĕ чух | Япала ячĕ *ă, ĕ* сасăсемпе пĕтнĕ чух: вĕсем умен пĕр хупă сасă çеç пулсан | Япала ячĕ *ă, ĕ* сасăсемпе пĕтнĕ чух: вĕсем умен икĕ хупă сасă пулсан |
|---|---|---|---|
| С1 | лаша+ăм=лашам<br>ĕне+ĕм=ĕнем | юрă+ăм=юррăм<br>сĕлĕ+ĕм=сĕллĕм | çулçă+ăм =çулçăм<br>кӳршĕ+ĕм=кӳршĕм |
| С2 | лаша+у=лашу<br>ĕне+ӳ=ĕнӳ | юрă+у=юрру<br>сĕлĕ+ӳ=сĕллӳ | çулçă+у=çулçу<br>кӳршĕ+ӳ=кӳршӳ |
| С3 | лаша+и=лаши<br>ĕне+и=ĕни | юрă+и=юрри<br>сĕлĕ+и=сĕлли | çулçă+и=çулçи<br>кӳршĕ+и=кӳрши |

| Сăпатсем | Япала ячĕ *у, ӳ* сасăсемпе пĕтнĕ чух | Япала ячĕ *и* сасăпа пĕтнĕ чух |
|---|---|---|
| С1 | çыру+ăм=çырăвăм<br>çитĕнӳ+ĕм=çитĕнĕвĕм | тăри+ĕм=тăрийĕм<br>çĕрçи+ĕм=çĕрçийĕм |
| С2 | çыру+у=çырăву<br>çитĕнӳ+ӳ=çитĕнĕвӳ | тăри+ӳ=тăрийӳ<br>çерçи+ӳвçерçийӳ |
| С3 | çыру+ĕ=çырăвĕ<br>çитĕнӳ+ĕ=çитĕнĕвĕ | тăри+ĕвтăрийĕ<br>çĕрçи+ĕ—çĕрçийĕ |



**-чĕ(-ччĕ)**

# Япала ятне иртнĕ вăхăт сĕмне парать

а) **юлташ*чĕ***
**отличник*чĕ***

ă) **Тĕп - çын*ччĕ***
**Кам.- çыннăн*ччĕ***
**Выр.- çынта*ччĕ***
**Пĕр.- çынпа*ччĕ***
**Çук.- çынсăр*ччĕ***
**Пирке- çыншăн*ччĕ***

**Пĕтĕмлетӳ. Аффикссăр тата аффикслă формăсене танлаштарнинчен çакă курăнать : -*чĕ (-ччĕ)* аффикс япала ятне иртнĕ вăхăт сĕмĕ парать. Аффкссăр формăн çав пĕлтерĕш çук. Çак аффикс кашни япала ячĕ çумнех хушăнма пултарать.**

**Асăннă аффикс япала ячĕн тĕрлĕ формисем çумне хушăнать:**

| падеж формисем çумне | нумайлă хисеп çумне | камăнлăх категорийĕн формисем çумне |
|---|---|---|
| учитель*ччĕ* | учительсем*ччĕ* | шывăм*ччĕ* |
| учителĕн*ччĕ* | çынсем*ччĕ* | шывăмăр*ччĕ* |
| учительте*ччĕ* | кĕнекесем*ччĕ* | шыву*ччĕ* |

№1

**Хăш-пĕр япала ячĕ танлаштару степнень аффиксне йышăнма пултарать.**



**Япала ячĕсем хăш-пĕр падежра чухне палăрту формин аффиксене йышăнаççĕ. -И, -СКЕР аффикссем йышăннă япала ячĕсем хăйсем тĕллĕн çўренĕ чух вĕçленеççĕ.**

-и

-скер

# Палăрту форми

-и
-ин
-ине
-инче
-инчен
-ипе
-исĕр
-ишĕн

-скер
-скерĕн
- скере
-скерте
–скертен
–скерпе
–скерсĕр
-скершĕн




- кĕнеке***ллĕ***
- ача***ллă***
- лаша***ллă***
- кутамкка***ллă***

кĕнеке***сĕр***
*ача****сăр***
лаша***сăр***
кутамкка***сăр***

**Пĕтĕмлетӳ.**

**Чăваш чĕлхи ăслăлăхĕнче -лă (-лĕ) аффикслă япала ячĕсене пурлă формăри , -сăр (-сĕр) аффикслисем çуклă формăри теме йышăннă.**

# Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсем

- Вырăсларан йышăнннă сăмахсем çумне хушăнакан аффикссен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ сăмах мĕнле сасăпа пĕтнинчен килет:
- Хытă хупă сасăпа тата й сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне хытă вариантлă аффикс хушăнать
- Бензин-бензинпа, старик-старикăн, музей-музейпа
- Хăш-пĕр чухне хытă хупă сасăпа тата й хупă сасăпа пĕтекен сăмах çумне аффиксăн çемçе варианчĕ хушăнма пултарать: номер- номерте, ответ-ответле, музей- музейре

# Тăванлăх сăмахĕсен камăнлăх формисем

| | Атте | Анне | Пичче | Мучи | Кинемей | Кукаçи |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | аттем | аннем | пиччем | мучи | кинемей | кукаçи |
| 2 | аçу | аннӳ | пиччӳ | мучу | кинемӳ | кукаçу |
| 3 | ашшĕ | амăшĕ | пиччĕшĕ | мучăшĕ | кинемĕшĕ | куккашшĕ |